[illegible] çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 МАЙ 16 ШАМАТКУН 112(6047) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çуракине ирттерес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕçсынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

20. **Шăхасан районĕнчи К. Е. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **А. Ильин юлташ**). Колхоз тĕштырă культурисене 6 ĕç кунĕнче акса пĕтерне, мĕн пурĕ 194 гектар акнă. Планран ирттерсе акнă 7 гектар çинчи тырпул оборона фондне тата фашистсен пусмăрĕнчен инкек курнă колхозсемпе колхозниксене тăванла пулăшнă çĕре каять. Ака вăхăтĕнче çак юлташсем хăйсене уйрăмăнах палăртнă: бригадирсем—**А. Пальмова, Д. Константинова, И. Никифоров, Д. Тарасова.** Сухаçăсем: **М. Гурьева, Е. Федорова, А. Трофимова, Е. Макарова** юлташсем вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçленĕ. Вĕсем нормăна кунсеренех 130 процент тултарса пынă. Сÿрелекенсем—**Д. Николаевпа И. Степанов** юлташсем кулленхи нормăна 150—200 процент тултарса ĕçленĕ.

21. **Шăхасан районĕнчи С. М. Киров ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **П. Якимов юлташ**). Колхоз тĕштырă культурисене 7 ĕç кунĕнче акса пĕтерне, мĕн пурĕ 377 гектар акнă. Оборона фондне хывма тата фашистла захватчиксенчен инкек курнă колхозниксене пулăшма колхоз планран ирттерсе 10 гектар акса хăварнă. **Л. Яковлев тата В. Степанова** юлташсем ертсе пыракан бригадăсенчи колхозниксем вăрçăри пек ĕçленĕ. Çав бригадăсенчи сухаçăсем — **А. Денисова, К. Васильева, С. Николаев, К. Емельянов** юлташсем кулленхи нормăна 130—140 процент тултарса ĕçленĕ, сÿрелекенсем — **Т. Артемьева, Ф. Исаев** юлташсем нормăна кулленех 150—160 процент тултарса пынă, тырă акакансем **Ф. Каховский, С. Поварский** нормăна 120—160 процент тултарса пынă.

22. **Шăхасан районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **С. Афанасьев юлташ**). Колхоз тĕштырăсене 6,5 ĕç кунĕнче акса пĕтерне Планпа кăтартнă 175 гектар вырăнне 178 гектар акнă. Планран ирттерсе 3 гектар оборона фондне хывма акса хăварнă. Колхозри **Е. Трофимов тата И. Павлов** юлташсем ертсе пыракан чи лайăх бригадăсем тĕштырăсене пысăк пахалăхпа 5,5 ĕç кунĕнче акса пĕтерне. Колхозниксемпе колхозницăсем — **А. Анисимова, Дмитриева, З. Васильев, Н. Федоров, М. Архипова** юлташсем çуракинче вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ĕçленĕ.

Тракторсемпе лашасен вăйне пĕтĕмпех ĕçе кÿлер!

Çуракине тухнăранпа икĕ эрне ытла иртрĕ. Республикăн пур районĕсенче те тырă акас ĕç хĕрÿллĕн пырать. Чылай районсем кăçалхи çуракин уйрăмлăхне вăхăтра шута илсе, çураки тума юрăхлă кашни сехетпе туллин усă курса ĕçлерĕç. Хĕрлĕ Чутай районĕ иртерех акмалли тырăсене майăн 15-мĕш тĕлне пĕтĕмпех акса пĕтерчĕ. Калинински районри 45 колхоз çурхи тырăсене акса çитерне. Çураки ĕçĕсем Вăрмар, Красноармейски, Шăхасан тата ытти хăшпĕр районсенче ăнăçлăн пулса пыраççĕ.

Анчах та çак икĕ эрне вăхăтпа пур районсем те пĕр пек лайăх усă кураймарĕç. Уйрăмах республикăн кăнтăр енчи районĕсем кая юлса пыраççĕ. Ку районсен руководителĕсем районри колхозниксемпе трактористсене çуракине хăвăрт туса ирттерес ĕçе кирлĕ пек мобилизацилеймерĕç.

Машинно-тракторнăй станцисен ĕçĕнче те пысăк çитменлĕхсем пур. Хăшпĕр машинно-тракторнăй станцисен трактор бригадисем çураки ĕçĕнче агротехникăна пăсаççĕ. Çĕрпÿ МТС-ĕн «Совет» колхозра ĕçлекен 15-мĕш бригади çĕре 5—6 сантиметр тарăнĕш кăна сухаланă.

Наркомзем тата унăн политсекторĕ çуракинче агрегатсем организацилесе ĕçлеме приказ панă. Ăна Çĕрпÿ машинно-тракторнăй станцийĕ пурнăçласа пымасть, кунта трактор çумне плугсем хыççăн сÿресене кăкармаççĕ. Çапла, тракторсен вăйĕпе туллин усă курман пиркиех, трактористсем те сахал ĕçлесе илеççĕ. МТС директорĕ тата политотдел начальникĕ кунта ĕç дисциплинине çирĕплетес енĕпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Трактор бригадисен ĕçĕпе куллен интересленмеççĕ.

МТС политотделĕсен начальникĕсен трактористсем хушшинче тата тракторсем ĕçлекен колхозсенче политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатмалла, МТС-сен ĕçĕнче çирĕп дисциплина тата йĕркелĕх туса хумалла, тракторсен тата лашасен вăйне пĕтĕмпех çуракине хăвăрт вĕçлес ĕçе мобилизацилемелле.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ кашни 15—20 трактор пуçне куçса çÿрекен мастерскойсем организацилеме хушнине Çĕрпÿ, Красноармейски, Шăмăршă тата ытти хăшпĕр машинно-тракторнăй станцисем халĕ те пурнăçламан. Трактор бригадисене вăхăтра пулăшу пама механиксем çирĕплетмен. Çавăнпа тракторсем кăшт пăсăлсанах кунĕ-кунĕпе ĕççĕр тăраççĕ. Тракторпа ĕçлеме кăçал çеç тытăннă çамрăк трактористкăсене ĕçре çителĕклĕ таран пулăшса пыманни уйрăмăнах палăрать. Куçса çÿрекен мастерскойсене халех организацилесе çитермелле, трактор бригадисене пулăшса тăракан механиксен ĕçне кирлĕ пек организацилемелле.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «МТС трактористчĕсем тата тракторсенчен кăкарса ĕçлемелли ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстернĕшĕн хушса тÿлесси çинчен» йышăннă постановлени трактористсемпе трактор патĕнче ĕçлекен колхозниксене тырпул тухăçне хăпартассишĕн пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме хавхалантарчĕ. Республикăри МТС-сен трактористчĕсемпе трактористкисем тата трактор çумĕнче ĕçлекен колхозниксем партипе правительствăн çак постановленине пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илчĕç. ВКП(б) райкомĕсен, МТС политотделĕсен çак постановление кашни тракторист, трактористка, кашни трактор бригади патне çитермелле.

Сĕнтĕр, Чкаловски, Комсомольски тата ытти хăшпĕр районсен руководителĕсем çураки ĕçĕсене тракторсемпе çеç тăвасси çине шанса йăнăш тăваççĕ. Çураки вăхăчĕ — хĕрÿ ĕç вăхăчĕ. Кунта кашни сехетпе минута хаклă. Вăхăтра суха туманни, вăхăтра акманни тырпул тухăçлăхне начарлатать. Çавăнпа халĕ çуракин хăвăртлăхне ÿстермелле, кашни трактора унăн пĕтĕм вăйĕпе ĕçлеттермелле, лашасене пурне те ĕçе кÿлмелле, кашни сехетпе туллин усă курма тăрăшмалла.

Çакна хăшпĕр колхозсенче халĕ те тивĕçлипе туса пымаççĕ. Сĕнтĕр районĕнчи «Аврора» колхозра 48 лаша. Çураки ĕçне 34 лаша çеç кÿлеççĕ. Çапла пулсан та, кунта çураки кая юлса пынине трактор çине йăвантарма пăхаççĕ.

Хăвăрт, анчах пысăк пахалăхпа акмалла. Анчах хăшпĕр районсенчи колхозсенче çураки агротехникине пăсаççĕ. Çĕрпÿ районĕнчи «Молодая сила» колхозра акнă вăрлăхсене 2—3 кун хушши сÿрелемесĕр вырттарнă. Çĕмĕрле районĕнчи «Комбайн» колхозра вăрлăха ним виçесĕр акаççĕ. Акас нормăна пурнăçламаççĕ, вăрлăхăн пахалăхĕ çине çавăрăнса та пăхмаççĕ. Йĕпреç районĕнчи «Красная Нива» колхоз 13 гектар çине сĕлĕ акнă. Акнă сĕллĕн шăтас пахалăхĕ пурĕ те 2 процент кăна пулнă. Çакăн пек çитменлĕхсем пулмалла мар. Паха вăрлăх акмалла, акнă вăрлăха агротехника кăтарнă пек витсе хăвармалла.

Хăшпĕр районсенчи руководительсемпе колхоз председателĕсем техникăллă культурăсене акассине кая хăвараççĕ. Йĕтĕн, кок-сагыз, эмел курăкĕсене вăхăтра акса хăварни питĕ те кирлĕ ĕç. Правительство колхозсене йĕтĕн вăрлăхне тĕштырăсемпе улăштарса илме май пачĕ. Анчах та хăшпĕр районсем, йĕтĕнпе кантăр вăрлăхĕ районра çитмест пулсан та, хăйсене панă вăрлăха халĕ те турттарса кайман. Çакă ĕнтĕ хăшпĕр районсем техникăллă культурăсене вăхăтра акассишĕн тăрăшманнине кăтартса парать.

Пирĕн çураки ĕçне тата ун хыççăнхи ĕçсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ хăвăртлăхпа туса пымалла, кашни колхозникĕн, колхозницăн фронтри пек ĕçлемелле.

Никам çĕнтерейми Ленин-Сталин ялавĕпе малалла, нимĕç захватчикĕсене аркатса тăкма!

Авиаци промышленноçĕнчи работниксен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн УСЛОВИЙĔСЕМ

Самолетсем тăвакан Ленин орденлĕ 18-мĕш номерлĕ заводри тата мотор сем тăвакан Ленин орденлĕ 26-мĕш номерлĕ заводри рабочисем, инженерсем, техниксем тата служащисем, Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕ çине ответлесе, авиаци промышленноçĕнчи мĕнпур работниксене тата авиаци промышленноçĕн заказĕсене пурнăçлакан халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсенчи предприятисен коллективĕсене государство заданийĕсене лайăхрах тата ирттерсе тултарассишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва сарса яма чĕнсе калаçĕç.

18-мĕш тата 26-мĕш номерлĕ заводсенчи работниксен пуçарăвне, çавăн пекех вĕсен чĕнĕвĕ çине авиаци завочĕсенчи работниксенчен нумайĕшĕсем анлăн ответленине хапăлласа, ВЦСПС-па Авиаци Промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕ авиапромышленность завочĕсен тата авиаци промышленноçĕн заказĕсене пурнăçлакан заводсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕн çакăн пек условийĕсене пĕлтереççĕ.

I

Авиаци завочĕсем тăрăх

Хăш заводсем талăкри графика çирĕп пăхăнса пырса тата плана пахалăх енĕпе тултарса пырса, самолетсем, моторсем, винтсем, агрегатсем, авиаприборсем, тĕслĕ прокатсем туса кăлармалли уйăхри плана тултараççĕ тата ирттерсе тултараççĕ — çавсем социализмлă ăмăртура çĕнтерекенсем шутланаççĕ.

Социализмлă ăмăртура çĕнтерлĕ заводсем валли ĕçре палăрнă рабочисене, инженерно-технически работниксене тата служащисене премилеме, çавăн пекех заводри работниксен коллективĕн культурăпа йăла условийĕсене лайăхлатмалли мероприятисене пурнăçа кĕртме укçан премисем памалла тăваççĕ:

пĕрремĕш премисем — 3
иккĕмĕш премисем — 6
виççĕмĕш премисем — 10.

II

Авиаци промышленноçĕн заказĕсене пурнăçлакан заводсем тăрăх

Хăш предприятисем палăртнă сроксене пăхăнса пырса, туса кăларнă продукцин комплекслăхĕпе пахалăхне çирĕп пăхăнса пырса тата завода панă государство планне пĕтĕмĕшпех тултарса авиаци промышленноçĕн заказĕсене пурнăçлаççĕ тата ытлашшипех пурнăçлаççĕ — çавсем социализмлă ăмăртура çĕнтерекенсем шутланаççĕ.

Авиаци промышленноçĕн заказĕсене пурнăçлакан чи лайăх предприятисем — социализмлă ăмăртура çĕнтерекенсем валли ăмăртура хăйсене палăртнă рабочисене, инженерсене, техниксене, служащисене тата заводăн ертсе пыракан составне хавхалантарма укçан премисем памалла тăваççĕ:

пĕрремĕш премисем — 5
иккĕмĕш премисем — 10.

Авиаци промышленноçĕн заказĕсене пурнăçлакан заводсене премисем пама йышăнассине, Авиаци Промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕ тăратнă тăрăх, ВЦСПС туса ирттерет; премисем пама государство планне пĕтĕмĕшпе тултарса, авиапромышленность заказĕсене пурнăçлас ĕçре палăрнă завода тăратаççĕ.

III

Социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене пĕтĕçтерессине тата премисем пама йышăнассине ВЦСПС-па Авиаци Промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕ килес уйăхăн 5-мĕш числинчен кая юлмасăр туса ирттереççĕ. Ăмăрту результачĕсем çинчен йышăннă постановленисене хаçатсенче кашни уйăхрах пичетлесе кăлараççĕ.

ВЦСПС тата Авиаци промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕ авиаци промышленноçĕнчи мĕнпур рабочисене, инженерсене, техниксене, служащисене тата авиапромышленность заказĕсене пурнăçлакан ытти отраслĕсенчи предприятисен коллективĕсене Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнма, фронт заказĕсене лайăхрах та лайăхрах пурнăçлама, çапла майпа 1942 çулта нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкас тата вĕсене совет çĕрĕ çинчен хăвалаcа кăларас ĕçре пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшма чĕнеççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 14-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Майăн 14-мĕшĕнче **Керчь** çурутравĕ çинче пирĕн войскăсем противника хирĕç хаяррăн çапăçса, унăн нумай ытларах вăйĕсем хĕснине пула, çĕнĕ позицисене чакнă.

Харьков енче пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла куçса пынă. Икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсенне 150 танкран кая мар пĕтерсе тăкнă тата çĕмĕрнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă ĕçсемех те пулса иртмен.

Тĕрĕслесе палăртнă даннăйсем тăрăх, майăн 12-мĕшĕнче нимĕçсенне малтан кăтартнă пек 43 самолет мар, 51 самолет пĕтерсе тăкнă.

Майăн 13-мĕшĕнче нимĕçсен 40 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 23 самолет пĕтнĕ.

* * *

Майăн 13-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 120 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 ытла автомашинине, горючи тултарнă автоцистернине, боеприпассем тиенĕ 30 лавне, 16 полевой тата зенитнăй орудине, 8 пулеметне пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассен склачĕпе горючи складне сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи эшелона çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине 2 батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем нимĕçсен фашистла войскисене çынсем тĕлĕшпе те, техника енĕпе те пысăк çухатусем кÿреççĕ. Пирĕн пĕр часть вунă кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 4.000 çынна ытла стройран кăларнă.

Пирĕн тепĕр часть çав вăхăт хушшинчех 12 тупă, 38 станковăй пулемет, 5 зенитнăй пулемет, 23 автомат, 5 радиостанци, винтовкăсем, снарядсем, минăсем тата патронсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противник пехоти, танксем пулăшнипе, темиçе хутчен те халăх пурăнакан пĕр пункта туртса илме хăтланса пăхнă. Мартиросов юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри боецсем гитлеровецсен атакисене пурне те сирсе янă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 150 çын ытла вилсе юлнă. Тăшманăн темиçе танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Старши лейтенант Селивановăн танк экипажĕ пĕр кун хушшинче нимĕçсен танкне, танксене хирĕç пемелли тупăпне пĕтерсе тăкнă тата пĕр юсавлă орудин тытса илнĕ. Моисеев лейтенант командир пулса ертсе пыракан тепĕр танк экипажĕ нимĕçсен икĕ орудине пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен истребительнăй отрячĕн штабне аркатнă, 20 пулеметпа автомат тата оперативнăй документсем тытса илнĕ.

* * *

Политрук Савенков юлташ ертсе пынипе пирĕн 4 боец тăшманăн самолечĕ çине винтовкăсенчен пеме тытăннă. Темиçе хутчен харăс пенĕ хыççăн самолета вут хыпса илнĕ те вăл çĕрелле ÿкнĕ. 3 летчик çунса кайнă, тăваттăмĕшне тыткăна илнĕ.

* * *

Орел облаçĕнчи П. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ сасартăк пырса çапса нимĕç оккупанчĕсене халăх пурăнакан икĕ пунктран хăваласа кăларнă. Хаяр çапăçура партизансем 250 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Партизансем 8 станковăй тата 18 ручной пулемет, 2 оруди, 4 миномет, пĕр огнемет, 300 ещĕк патрон, 14 ещĕк мина тата винтовкăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 52-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 181-мĕш полкăн 7-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Антон Кревольд çапла каласа панă: «Мартăн 1-мĕшĕнче пирĕн запасри ротăна, мĕнпурĕ 170 çынна, вагонсем çине лартрĕç те фронта ячĕç. Рославль хулине çитсен, пире çапла асăрхаттарчĕç: кунта кашни минутăрах вырăс партизанĕсем тапăнма пултараççĕ, çавăнпа та яланах хатĕр пулмалла, терĕç. Чăнах та, Рославльрен тухса кăшт кайнă-каймах пирĕн автоколонна çине пеме пуçларĕç. 18 салтака вĕлерчĕç, темиçе çынна йывăр амантрĕç. Фронта çитсен рота малтанхи çапăçурах 60 çынна ытла çухатрĕ, вĕсенчен пĕрисем вилнĕ, теприсем аманнă. Вырăссен артиллерийĕпе миномечĕсем пысăк çухатусем кÿреççĕ. Нимĕçсен артиллерийĕ пĕрре персен вырăссем ăна хирĕç виççĕ переççĕ, çитменнине тата вĕсем питех те тĕл переççĕ».

* * *

Румынире нумай хуласенче Венгрие хирĕçле демонстрацисем пулса иртнĕ. Демонстрантсем венгерсем туртса илнĕ Трансильвание каялла Румыни аллине хĕспăшалпа тытса илме ыйтнă. Румыни влаçĕсем стратегиллĕ çулсене васкасах юсама тытăннă. Венгри чиккинче укрепленисем тăваççĕ, боеприпассен склачĕсем хатĕрлеççĕ. Çакна хирĕç Венгри полицийĕ хăй енчен Клужра, Тырку-Мулешре тата ытти хуласенче те румынсене массăллăн арестлет, нумайĕшне персе пăрахаççĕ.

Майăн 15-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Майăн 15-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Керчь çурутравĕ çинче вăйлă çапăçусем пулса пынă. Харьков енче пирĕн чаçсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман.

* * *

Харьков енче пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусене малалла ăнăçлăн туса пыраççĕ. Пирĕн пĕр часть пĕр кун хушшинче гитлеровецсене 1.500 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ тата 150 çынна тыткăна илнĕ. Трофейăсене шута илеççĕ. Пирĕн тепĕр часть нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 260 çынна пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 8 орудине, 6 пулеметне, 2 минометне, пĕр радиостанцине тата ытти çар пурлăхĕсене тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен совет танкисчĕсем нимĕçсем йышăннă яла кĕтмен çĕртен атакăланă. Хăюллă боецсем, 135 нимĕçе пĕтерсе тăкса, 1 миномет, шултăра калибрлă 2 пулемет, минăсем нумай тытса илнĕ, противникăн боеприпассем хунă складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Юдинцев юлташ командир пулса тăракан пирĕн часть (Калинин фрончĕ) пилĕк кун хушшинче гитлеровецсене 500 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Старши лейтенант Шутовăн подразделенийĕ тăшманăн 3 контратакине сирсе пăрахнă, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Çак çапăçура кĕçĕн политрук Чвырев паттăррăн çапăçнă. Вăл хăех 16 нимĕçе вĕлернĕ. Лейтенант Рыскаль çав çапăçурах 12 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Тирашев командирăн подразделенийĕнчи артиллеристсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен батарейине, çар пурлăхĕ тиенĕ 10 лавне, станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă, тăшман пехоти вырнаçнă 17 блиндажа аркатнă.

* * *

В. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕсем, Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче тăшман тылĕнче кĕрешекенскерсем, юлашки вăхăтра нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 600 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Партизансем противникăн боеприпассем хунă складне сирпĕнтерсе янă тата нумай трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 79-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 212-мĕш полкăн 11-мĕш ротинчи салтак Франт, майăн 12-мĕшĕнче Харьков енче тыткăна илнĕскер, çапла пĕлтернĕ: «Вырăссем наступлени тума тытăнсан, пирĕн ротăри салтаксен ушкăнĕ контратака тума килĕшмерĕ. Офицер çавăнтах 6 салтака персе пăрахрĕ».

* * *

Аялараххра нимĕçсен унтер-офицерĕн (унăн хушаматне палăртма май килмен) записной кĕнекинчен илнĕ сыпăксене пичетлетпĕр:

«Батальонăн каялла чакма лекрĕ, мĕншĕн тесен вырăссем 431-мĕшпе 432-мĕш полксем хушшинче фронта татса кĕрсе кайнă. Ирхине вырăссем, танксемпе артиллери пулăшнипе, яла йышăнса илчĕç. Пирĕн каллех вилнисем нумай.

Батальонра пĕтĕмпе те 40 çын çеç юлчĕ. Пирĕн пата Горн вырăнне 39 çулти унтер-офицер Корнер килчĕ. Горн хăйĕн аллине пистолетран персе шăтарнă.

Грузовиксем çине ларса çĕнĕ пополнени килчĕ. Полка пĕтĕмпе те 100 çын çеç панă. Пурте нимĕн те вĕренмен çынсем. Кулăшла! Ку вăл — тупă какайĕ çеç.

Татах 10 километр чакрămăр. Вăрмансемпе таврари ялсенче партизансем нумай, тесе каласа параççĕ. Вĕсем 10.000 çынна яхăн. Вĕсен çĕнĕ минометсем пур.

Кÿршĕри ялта пĕр çурт сывлăшалла сирпĕнчĕ. Унта мина хунă пулĕ, тесе шутлаççĕ. 76 çын (пĕр рота!) вилсе е аманса пĕтнĕ».

Вĕçĕ 2-мĕш страницăра

Алтай крайĕнчи, Новосибирск, Омск облаçĕсенчи, Красноярск крайĕнчи, Челябинск облаçĕнчи тата Казах ССР-ĕн çурçĕр-хĕвелтухăç облаçĕсенчи ялхуçалăхĕнче малта пыракансене наградăлани

Ялхуçалăхĕнче тунă пысăк çитĕнÿсемшĕн, уйрăмăнах çĕнĕ йышши культурăсем акса тăвас ĕçе ăнăçлăн пуçарса янăшăн, акмалли çĕр лаптăкне асăлатса пынăшăн тата тырпул тухăçлăхне ÿстерсе пынăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх наградăланă:

АЛТАЙ КРАЙĔ ТĂРĂХ

Ленин орденĕпе — 14 çынна;
Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе — 37 çынна;
«Знак почета» орденпа — 46 çынна;
«За трудовую доблесть» медальпе — 50 çынна;
«За трудовое отличие» медальпе—59 çынна наградăланă.

НОВОСИБИРСК ОБЛАÇĔ ТĂРĂХ

Ленин орденĕпе — 13 çынна;
Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе — 23 çынна;
«Знак почета» орденпа — 40 çынна;
«За трудовую доблесть» медальпе — 36 çынна;
«За трудовое отличие» медальпе—37 çынна наградăланă.

ОМСК ОБЛАÇĔ ТĂРĂХ

Ленин орденĕпе — 11 çынна;
Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе — 24 çынна;
«Знак почета» орденпа — 38 çынна;
«За трудовую доблесть» медальпе—43 çынна;
«За трудовое отличие» медальпе—45 çынна наградăланă.

КРАСНОЯРСК КРАЙĔ ТĂРĂХ

Ленин орденĕпе — 10 çынна;
Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе — 24 çынна;
«Знак почета» орденпа — 30 çынна;
«За трудовую доблесть» медальпе — 39 çынна;
«За трудовое отличие» медальпе—42 çынна наградăланă.

ЧЕЛЯБИНСК ОБЛАÇĔ ТĂРĂХ

Ленин орденĕпе — 7 çынна;
Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе — 16 çынна;
«Знак почета» орденпа — 32 çынна;
«За трудовую доблесть» медальпе — 45 çынна;
«За трудовое отличие» медальпе—40 çынна наградăланă.

КАЗАХ ССР-ĔН ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛТУХĂÇ ОБЛАÇĔСЕМ ТĂРĂХ

Ленин орденĕпе — 19 çынна;
Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе — 47 çынна;
«Знак почета» орденпа — 80 çынна;
«За трудовую доблесть» медальпе — 88 çынна;
«За трудовое отличие» медальпе — 122 çынна наградăланă. (ТАСС).

--o--

Отечественнăй вăрçă фронтĕнче

ФАШИСТСЕМ ПУЛНĂ ВЫРĂНСЕНЧЕ

КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, майăн 11-мĕш. (**ТАСС спецкорĕ**). Украина çыннисен шурă шурчĕсем ларса тухнă урамсем, симĕс пахчасем, вишня сачĕсем—çакăн пек курăннă ĕлĕк Харьков облаçĕнчи Морозовка ялĕ. Халĕ кунта çунтарса янă 250 çуртăн кăмрăкланса кайнă трубисем кăна курăнса лараççĕ. Фашистсем колхозăн пуян хуçалăхне пĕтĕмпех çĕмĕрсе тата çаратса пĕтернĕ.

Каялла чакас умĕн фашистсем пĕтĕм халăха амбара хăваласа хупнă та малтанрах çаратса илсе кайма ĕлкĕреймен япаласене пурне те турттарса кайма тытăннă. Çакăн хыççăн гитлеровецсем хĕрарăмсене, çамрăк ачасемпе хĕрсене 50 çынна суйласа илнĕ, вĕсене тыткăна илнĕ тесе пĕлтерсе, тыла хăваласа кайнă. Ытти халăха тискеррĕн асаплантарса вĕлерме вĕсене Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем çак яла йышăнса илни чăрмантарнă.

Халĕ облаçра нимĕçсенчен хĕн-хур курнă халăха тăванла пулăшу парас ĕçе организацилеççĕ. Морозовкăна темиçе çĕр пăт тырпул, кĕрпе, çу, супăнь ярса панă та ĕнтĕ. **Л. ТРИФОН.**

ФАШИСТСЕН 19 САМОЛЕТНЕ ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ

КĂНТĂР ФРОНЧĔ, майăн 13-мĕш. (ТАСС). Нумаях пулмасть Н-ски гвардейски чаçăн летчикĕсем фашистсен пысăк аэродромне вăйлăн аркатса тăкнă.

Аэродром патне систермесĕр вĕçсе пырса, ун çине хăйсен пĕтĕм вут-çулăмĕпе тапăнса, старши лейтенант Моспановăн группинче тăракан пирĕн летчиксем противникăн 19 самолетне пĕтерсе тăкнă тата 22 самолетне çĕмĕрнĕ. Пирĕн самолетсем пурте пĕр сиенсĕрех каялла таврăннă.

И. ЛАПОНОГОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 15-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

* * *

Нимĕçсен 3-мĕш танковăй армине 1603-мĕш номерпе пана вăрттăн приказа пирĕн чăçсем тытса илнĕ. Приказра каланă тăрăх, Германин чылай районĕсенче шатра тифĕ, дифтерит, скарлатина тата ытти чирсем вăйлăн саралса кайнă. Приказăн 6-мĕш параграфĕнче 23 округа кăтартнă, çав округсенче тифпа ытти чир-чĕрсем уйрăмăнах хăрушла сарăлнă. Салтаксене çав округсене кĕме чарнă.

* * *

Берлин çывăхĕнчи çар заводĕсенчен пĕринче ютçĕршыв рабочийĕсем пăсăк апат çисе массăллăн чирленĕ. Тарăхса кайнă рабочисем забастовка пуçланă та хăйсене тăван çĕршыва яма ыйтнă. Çакăн хыççăн полиципе штурмовиксен отрячĕсем завода пынă та нумай çынна арестленĕ. Темиçе кунран заводра пушар тухнă. Пушар пулнипе темиçе цех пĕтнĕ.

ВКП(б) Мускав хула комитечĕн пленумĕ

Майăн 12-мĕшĕнче ВКП(б) Мускав хула комитечĕн пленумĕ пулса иртнĕ. «Партин Мускав организацийĕн черетри задачисем» çинчен ВКП(б) Мускав область тата хула комитечĕсен секретарĕ **А. С. Щербаков** юлташ доклад туна.

Докладчик партин Мускав организацийĕн отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи ĕçĕсен итогне туса панă, Мускав большевикĕсен черетри задачисем çинчен каласа кăтартнă.

Щербаков юлташ юлашкинчен каланă сăмаха итленĕ хыççăн пленум решени йышăннă. Унта çакна палăртнă: Мускав парторганизацийĕ Сталин юлташ 1941 çулти июлĕн 3-мĕшĕнче, 1941 çулти ноябрĕн 6-мĕшпе 7-мĕшĕнче туxса каланă сăмахсенче, 1942 çулти февралĕн 23-мĕшĕнчи приказра панă историллĕ кăтартусене пурнăçа кĕртес енĕпе отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче чылай ĕçсем туса ирттернĕ.

Отечественнăй вăрçăн хаяр кунĕсенче партин Мускав организацийĕ ĕççыннисене большевиксен партипе совет правительстви тавра тачă пĕрлештерсе пынă, вĕсене фронта мĕнпур вăйран пулăшса тăмашкăн хăйсене шеллемесĕр ĕçлеме мобилизациленĕ, Мускав хулине никам çĕнтерейми крепость туса хума пулăшнă, унăн çывăхĕнче вара нимĕçсен фашистла захватчикĕсене аркатасси пуçланнă.

Майăн 1-мĕшĕнчи историллĕ приказра Сталин юлташ çакна палăртать: «Хĕрлĕ Çарăн ăнăçлăхĕсене пула отечественнăй вăрçă çĕнĕ тапхăра, совет çĕрĕсене гитлерла ирсĕрсенчен хăтарса ирĕке кăларас тапхăра кĕчĕ».

Хĕрлĕ Çарăн тата халăхăн çулпуçĕ, Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин пирĕн Хĕрлĕ Çара çакăн пек боевой приказ пачĕ: «1942 çула нимĕçсен фашистла войскисене пĕтĕмпех аркатса тăкмалли тата совет çĕрне гитлерла мерзавецсенчен ирĕке кăлармалли çултăк туса хумалла!»

Сталин юлташăн çак кăтартăвĕсенчен ĕнтĕ партин Мускав организацийĕн черетлĕ задачисем тухса тăраççĕ.

Хĕрлĕ Çара тивĕçлĕ аслă та пархатарлă мисси, нимĕç оккупанчĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкас тата совет çĕрне гитлерла ирсĕрсенчен тасатас мисси вара партин пур организацийĕсене те тыла малалла çирĕплетсе пыма, çĕршывăн пур вăйĕсемпе ресурсĕсене те фронт валли йăлтах мобилизациллеме хушать. Хĕрлĕ Çар валли тĕрлĕ йышши хĕçпăшалсем, боеприпассем, снаряженисем, апат-çимĕç пĕтĕмпех çителĕклĕ парса тăрасси кашни ĕççыннин таса тивĕçĕ пулса тăрать.

Сталин юлташăн приказĕ çĕршывра çĕнĕ çĕкленӳ пуçарчĕ. Социализмлă ăмăртăвăн хумĕ çӳлерех те çӳлерех çĕкленет. Миллионшар совет патриочĕсем хуласемпе ялсенче çулпуç Хĕрлĕ Çара мĕнпур вăйран пулăшса пыма чĕнни çине паттăрла ĕçлесе çĕнĕ ситĕнӳсем тунипе ответлеççĕ. Партин пур организацийĕсен те халăхн вăхăтри боевой задачи — ĕççынни массисен çав производствăри тата политикăллă пурнăçри хăватлă çĕкленĕвне пуçарса пырасси пулса тăрать.

Фронта мĕн кирлине пурне те парса тăрас ĕçре Мускав промышленноçĕ çавтери пысăк вырăн йышăнса тăрать, ку вара предприятисене пĕр чарăнмасăр тата ăнăçлăн ĕçлеттерес тĕлĕшпе Мускав организацийĕ çавтери пысăк ответлăхлă пулнине палăртса парать.

ВКП(б) Мускав хула комитечĕн пленумĕ Мускав промышленноçĕн ресурсĕсемпе резервĕсене мобилизацилесе пырассине малашне те туса пыма питтĕ кирлине уйрăмах палăртнă.

Пленум хуçалăх руководителĕсене тата парти организацисене çакăн çине çавăрăнса пăхма хушнă: квалификациллĕ рабочисем хатĕрлес ĕçе хăвăртрах организацилемелле, çĕнĕ рабочисемпе работницăсене профессие вĕрентсе ситме кашни кунах пулăшса пымалла тата ĕç вăхăтне усăсăр пĕтерни хирĕç кĕрешмелле.

Пленум парторганизацисене пурне те ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII-мĕш конференцийĕн решенийĕсене çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пыма хушнă. Предприятисенчи администрацисен ĕçĕсене контрольлесе тăма панă правăпа парти организацийĕсен туллин усă курмалла, талăкри графика пурнăçа кĕртсе пынине, снабжени аппарачĕ ĕçленине тата технологи дисциплинине пăхăннине, ĕç дисциплини мĕнлине, продукцин хăйне ларакан хакне чакарнине, металла, топливăна, электроэнергие перекетлĕн расходланине тĕрĕслесе тăрас пулать.

Пленум парти райкомĕсене, Мускав совечĕн исполкомне, партин пуçламĕш организацийĕсене тата профсоюз оргăнĕсене пурне те ĕççыннисен материальнăй пурнăçне лайăхлатассишĕн, уйрăмах Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсен çемьисемшĕн вăйлăнрах тăрăшма хушнă. Пленум суту-илӳ предприятийĕсен, столовăйсен, буфетсен, ОРСсен, подсобнăй хуçалăхсен ĕçĕсене хытă тĕрĕслесе тăма хушнă.

Пленум парторганизацисене Мускава сывлăшран тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран хӳтĕлессине лайăхлатса пыма тата всевобуч, осоавиахим, РОКК енĕпе Хĕрлĕ Çар валли резервсем хатĕрлеме кирлине кăтартса панă.

Пленум уйрăмах çакна палăртнă: Мускав парторганизацийĕ умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн татса парасси коммунистсем пурте большевикла хастарлăхпа ĕçленинчен килет. Партиллĕ-политикăллă ĕçĕн çӳллĕшĕ вăрçă вăхăтĕнчи çĕнĕ условисене тивĕçлĕ пек пулмалла. Парти организацийĕсен актива тата тачăрах пĕрлештермелле, малта пыракан çынсене, вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсене суйласа илсе парти ретне илес ĕçе вăйлатмалла. Беспартийнăй актив хушшинче кашни кунах ĕçлес, çĕнĕ рабочисем, хĕрарăмсем тата çамрăксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе организацилес ыйтусем партин организацийĕсен ĕçĕнче тĕп вырăнта тăмалла. Коммунистсен обязанноçĕ — хăйсем тӳрĕ ĕçленинче, производствăра малта пыракансем пулнинче кăна мар, вĕсем беспартийнăй массăсене ертсе пыракансем, активлă организаторсем тата агитаторсем, парти ĕçĕшĕн, халăх ĕçĕшĕн кĕрешекенсем пулмалла.

Партин Мускав хула комитечĕн пленумĕ: Мускав большевикĕсем тата ĕççыннийĕсем пурте Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнчи историллĕ приказра кăларса тăратнă задачăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе вăйсене вунă хут ӳстерсе ĕçлессине, хăйсене шеллемесĕр ĕçлесе нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкма тата совет çĕрне гитлерла мерзавецсенчен тасатма Хĕрлĕ Çара пулăшассине пленум шанса тăрать, тенĕ. (ТАСС).

Комсомолăн Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ

Майăн 13-мĕшĕнче комсомолăн Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. «Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне пурнăça кĕртес тĕлĕшпе комсомолăн хулари организацийĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен» ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Д. Федоров юлташ доклад туса пачĕ.

Пренире Филиппов, Данилова (электроаппаратура заводĕнчи трехсотница), Григорьева (комсомолăн чугунçул станцинчи организацийĕн секретарĕ), Парголина (комсомолăн электроаппаратура заводĕнчи комитечĕн секретарĕ), Кошелев (6-мĕш номерлĕ шкулти отличник), Петров (Пионерсен çуртĕ), Ислюков (ВКП(б) хула комитечĕн пропаганда агитаци отделĕн заведующийĕ), Башкирова (ВЛКСМ обкомĕн секретарĕ), Трусова тата ытти юлташсем те тухса калаçрĕç.

Актив пухăвĕ Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне пурнăça кĕртес тĕлĕшпе мĕнле практикăллă ĕçсем тумаллине палăртса решени йышăнчĕ.

Комсомола кĕреççĕ

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче пирĕн çамрăксен политикăллă активлăхĕ татах та ӳсрĕ. Вĕсем хăйсен кулленхи ĕçĕсене, пурнăçĕпе кĕрешӳне çамрăксен малта пыракан отрячĕпе — Ленинла-Сталинла комсомолпа—çыхăнтарма тăрăшаççĕ, çавăнпа унăн ретне кĕреççĕ.

Красноармейски районра юлашки вăхăтра 93 çынна комсомол ретне илнĕ. Вĕсем пурте — ялхуçалăх ĕçĕнче малта пыракан, фронта ытларах тырпул, ашкакай, сĕт-çу, промышленноçа чĕртавар парассишĕн тăрăшса ĕçлекен çамрăксем.

Комсомол ретне ӳстерес тĕлĕшпе МТС çумĕнчи организацин секретарĕ С. Воробьев юлташ лайăх ĕçлет. Вăл çамрăк трактористсемпе тата трактористкăсемпе калаçса, вĕсене комсомола илме хатĕрлет. Юлашки вăхăтра унти организацире 6 çамрăка комсомол ретне илнĕ.

В. АРХИПОВ,
Р. ВАСИЛЬЕВА.

Машинно-тракторнăй станцисен ĕçĕнчи çирĕп йĕркелĕхшĕн

Хĕрлĕ Чутай районĕ тĕштырăсене акса пĕтерне

Енер ВКП(б) Обкомĕ, Чăваш АССР Совнаркомĕ тата Çĕрĕç Халăх Комиссарначĕ ячĕпе Хĕрлĕ Чутай районĕнчен çакăн пек телеграмма илнĕ:

«Районри колхозсем ир акмалли тĕштырă культурисене акса пĕтерчĕç. Пĕтĕмпе 7.858 гектар акнă. Колхозсемпе машинно-тракторнăй станци каярах юпса пулакан культурăсене акма çĕре хатĕрлеме тытăнчĕç тата техникăллă культурăсене—йĕтĕнпе кок-сагыза акас ĕçе вăйлатса пыраççĕ. МТС лайăх ĕçлет.

ВКП(б) Райкомĕн Секретарĕ КУЗЬМИН.

Райсовет Исполкомĕн Председателĕ НИКИТИН.

Çĕрĕç пайĕн заведующийĕ ГАНЮШКИН».

Çитменлĕхсене вăхăтра сирмеççĕ

ШАХАСАН, майăн 14-мĕш. (**Телефонпа**). СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ МТС трактористчĕсене тата тракторсенчен кăкарса ĕçлемелли ялхуçалăх машинисемпе ĕçлекен колхозниксене ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстернĕшĕн ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен постановлени йышăнни трактористсен ĕçри хавасăлăхне çĕклекен пысăк вăй пулса тăчĕ. Партипе правительство трактористсене пысăк тухăçлăн ĕçлеме май туса пачĕç. Çак постановление МТС тата политотдел руководителĕсен кашни тракториста, трактористкăна, трактор патĕнче ĕçлекен колхозниксене ăнлантарса памалла. Трактористкăсемпе трактористсен социализмлă ăмăртăвне çӳллĕ пусăма çĕклемелле, стахановла ĕçлекен трактористсен опытне анлăн сарса пымалла.

МТС-ăн Сидоров юлташ ертсе пыракан трактор бригади майăн 12-мĕш тĕлне çураки планне 51 процент, Куликов юлташ бригади 42 процент, Григорьев юлташ бригади 32 процент, Морозов юлташ бригади 36 процент тултарнă. Тракторист Максимов кулленхи нормăна 175 процент тултарать, акана тухнăранпа вăл хăйĕн тракторĕпе 65 гектар сухаланă. Тракторист Пегасов юлташ ĕç нормине куллен 180 процент тултарса пырать, виçĕ смена хушшинче вăл горючине 75 килограмм перекетлесе хăварнă.

Анчах та МТС çителĕксĕр ĕçлет-ха. Тракторпа тумалли ĕçсен планне 28,6 процент çеç пурнăçланă. Уйрăмăнах 1-мĕш тата 2-мĕш бригадăсем начар ĕçлеççĕ. МТС руководителĕсем ĕç вырăнне вăхăтра уйăрса паман пирки ку бригадăри тракторсем майăн 8-мĕшне çитиччен ĕçсĕр ларнă, ĕç вырăнĕ пыраса, вырăнтан вырăна куçса çӳресе, вăхăта усăсăр ирттернĕ.

Çакăн пек çитменлĕхсене тĕпренех пĕтермелле, кашни трактор çуракинче туллин ĕçлетĕр. Малта пыракан трактористсен ĕç опытне сарса пырас пулать.

С. ШАДИН.

ТРАКТОРИСТСЕМ ПЫСĂК ÇĔКЛЕНӲПЕ ĔÇЛЕÇÇĔ

Çĕмĕрле МТС-ĕн трактор бригадисем майăн 11-мĕш тĕлне пурĕ 907 гектар сухаласа, тракторпа тумалли ĕçсен планне 31 процент пурнăçларĕç. Трактористсен ĕç тухăçлăхĕ кунран-кун ӳссе пырать. Трактор бригадисем хушшинчи социализмлă ăмăртура уйрăмах 7-мĕш бригада малта пырать. План тăрăх бригада 180 гектар сухаламалла, майăн 12-мĕш тĕлне ăна вăл пĕтĕмпех пурнăçларĕ. Бригадăри стахановец Федотов юлташ майăн 11-мĕш тĕлне 110 гектар сухаласа, плана срокчен 184,6 процент пурнăçларĕ.

Данилов юлташ ертсе пыракан 3-мĕш бригада та пысăк тухăçлăхпа ĕçлет. Тракторист Семенов газогенераторлă тракторпа майăн 12-мĕшĕ тĕлне 70 гектар сухаланă, тракторист Михайлов юлташ куллен 6—7-шер гектар сухаласа пырать.

Енер «Заря» колхозра ĕçлекен тракторист Семенов юлташ сменăра 10 гектар сухаларĕ, Кинсарова трактористка «Универсал» тракторпа 15 гектар çĕре культиваци турĕ. Хăвăртрах та лахăйрах ĕçлессишĕн ăмăрту вăйланнăçемĕн вăйланса пырать.

Х. ЛИСИН

Майăн 14-мĕш. (**Хамăр корр., телефонпа**).

ĔÇ НОРМИНЕ 200 ПРОЦЕНТ ТУЛТАРСА ĔÇЛЕÇÇĔ

КУСЛАВККА, майăн 13-мĕш. (**Телефонпа**). Эльменкассинчи «Кзыл-Куч» колхоз членĕсем Хабиз Нагомеджанов, Хабир Матигуллин тата ыттисем те çуракинче пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Шарафутдинов Шигаб юлташ майăн 10-мĕшĕнче 5,2 гектар тырă акрĕ. Гильязова юлташăн бригади ĕç нормине кулленех 200 процент тултарса ĕçлет.

Фаизова, Хуснутдинова учительницăсем колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче агитациллĕ-ăнлантаруллă ĕçе лайăх туса пыраççĕ. Вĕсем Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне колхозниксене ăнлантарса пачĕç. Çакăн хыççăн колхозниксен ĕç тухăçлăхĕ татах та ӳсрĕ.

Çавăн пекех Аслă Куснарти «16-мĕш партсъезд», Çӳлти Куснарти «Красная Чувашия» колхозсенче те çураки хĕрӳллĕн пырать.

И. ШАРКОВ.

Çĕрулми вăрлăхне яровизацилеççĕ

СОВЕТСКОЕ. Юманайĕнчи «Большевик» колхоз кашни çулах çĕрулмине пысăк тухăçлăн туса илет. Кăçал та колхозниксем çавăншăн тăрăшаççĕ. 14 гектар çине яровизациленĕ çĕрулми лартаççĕ. 60 центнер çĕрулми вăрлăхне яровизацилеме хунă.

В. АНДРЕЕВ.

Ирĕке кăларнă колхозсене пулăшма

ШАХАСАН. Чулкăмака ялсоветĕнчи «Память Ильича» колхоз нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене пулăшма 15 центнер тырă уйăрса панă.

А. ФЕДОРОВ.

Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту

Ăмăрту вăйлансах пырать

ÇĔМĔРЛЕ, майăн 15-мĕш. (**Телефонпа, хамăр корр.**). Промышленноçра малта пыракансен чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн комбинатра ĕçлекенсен хушшинчи социализмлă ăмăрту татах вăйланчĕ. Рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем фронта кирлĕ продукцисене ытларах та лайăхрах туса кăларассишĕн кĕрешеççĕ. Сăмахран, Назаров юлташ ертсе пыракан цехри комсомолецсен бригади кулленхи задание 150 процент тултерма пулнă, халĕ вăл 180 процент тултарса пырать.

Ăмăртура рабочисем хăйсен ĕç тухăçлăхне чылай ӳстерчĕç. Иртнĕ уйăхра нормăпа пăхнинчен икĕ хут тухăçлăрах ĕçленĕ Афонинпа Посадин токарьсем çак уйăхăн малтанхи декадинчи заданисене 300-шер процент тултарчĕç. Çавăн пекех Татаркинпа Краснощеков рабочисем те нормăпа пăхнинчен виçĕ хут тухăçлăрах ĕçлеççĕ. Вĕсем май уйăхĕнчи ĕç планне вунă кун хушшинчех тултарчĕç.

Нормăсене ирттерсе тултараççĕ

КАНАШ, майăн 15-мĕш. (**Телефонпа**). Вагонсем юсакан заводри стахановла бригадăсем социализмлă ăмăртура çĕнĕ ӳсĕмсем тăваççĕ. Столярсен бригадисем ку таранччен пĕр вагона виç-тăватă кун хушши юсанă пулсан, халĕ талăк хушшинчех юсаса кăлараççĕ. Чернухин, Ткаченко, Дмитриев юлташсен бригадисем кашниех майăн 12-мĕшĕнче вагонсем юсамалли задание ирттерсе тултарчĕç. Марченко юлташăн бригади задание 300 процент тултарчĕ. Столярсен бригадисем çакăн пек тухăçлă ĕçлени уйрăм рабочисем хушшинче ăмăрту сарса янинчен тата ĕçе хăвăртлатмалли майсемпе усă курнинчен килет.

Социализмлă ăмăртура ытти цехсенчи рабочисем те лайăх ĕç тĕслĕхĕсем кăтартаççĕ. Инструментальнăй цехри термистсем, Маряковпа Смирнов юлташсем, сменăри заданисене пĕрмаях 7—8 хут ирттерсе тултараççĕ. Тимĕр-тăмăр шăратакан цехри Татариковăпа Котляренко юлташсем нормăпа пăхнинчен виçĕ хут, Елисин, Демяненко тата Саенко токарьсем икĕ хут тухăçлăрах ĕçлеççĕ.

П. С.

Германин предприятийĕсенче саботажла ĕçсем нумайланаççĕ

СТОКГОЛЬМ, майăн 14-мĕш. (ТАСС). Юлашки вăхăтра Германире саботажла ĕçсем нумайланаççĕ. Магдебург хулинчи паровой арманта пăс парса тăракан хуран сирпĕнсе кайнă. Нумаях пулмасть Берлинра, Ангальтски вокзал çывăхĕнче, хулана шыв парса тăракан пăрăх «çурăлса» кайнă. Пĕтĕм таврана шыв илнĕ. Çакна пула Ангальтски вокзал çывăхĕнчи Рангсдорф тата Лихтерфельд-Ост районĕсенче нимĕнпе те çӳремелле мар пулса тăнă. Берлинăн çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче, Паульштрассере, çĕнĕрен тăвакан çурта вут тивертнĕ. Строительствăри барак тата тăвакан çурт таврашĕнчи йывăç пусмасем йăлтах çунса кайнă. Тондерн станцинче вăйлă пушар тухнă. Пушарпа товарнăй станци тата темиçе склад çунса кайнă. Зальцгаузен çывăхĕнчи вăрмана вут тĕртсе çунтарнă. Пушар пысăк сиен кӳнĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕН УХМАХЛА ФАЛЬШИВКИСЕМ

СТОКГОЛЬМ, майăн 14-мĕш. (ТАСС). Ухмахла фальшивкăсем шухăшласа кăларма вĕреннĕ гитлерла йытă-çыравçăсем юлашки вăхăтра пĕтĕм вăйĕсене хурсах нимĕç халăхĕн кăмăлне çĕклеме хăтланаççĕ. Нимĕçсен фашистла хаçачĕсем çине тăрсах Геббельс кухнинче хатĕрленĕ фото-ӳкерчĕксене тата «хăйсем курнă çынсен» ĕненмелле мар сăмахĕсене пичетле-пичетле кăлараççĕ. Тĕслĕхе илсен, «Кракауер цейтунг» хаçат Украина халăхĕ нимĕç танкисчĕсене «саламласа йышăнакан» фотоӳкерчĕке пичетлесе кăларнă. Ӳкерчĕк çинче пысăк нимĕç танкĕ курăнать. Чул катăкĕсен купи çумĕнче 6 хĕрарăм тăрать. Вĕсенчен пĕри, карчăк, аллисене хăй айăкĕсем çинелле тĕрелесе, пырса кĕрекен танкистсем çине тарăхуллăн пăхать. Пĕр çамрăк хĕр çурт кĕтессине лăпчăнса тăнă, тепĕр хĕрĕ айăккалла çавăрăннă та куçĕсене алăпа хупланă, — вăл макăрать пулмалла. Ытти хĕрарăмĕсем сĕнксе тăраççĕ. Ӳкерчĕк çинчи çынсем пырса кĕрекен тăшмансем çине кураймасăр пăхня пуринпĕн те уççăнах сисĕнет, анчах, алла пулин те, фашистсен хаçачĕ ун çинчен халăх нимĕçсене «ăшшăн кĕтсе илет» тесе тытарать.

«Гамбургер фремденблатт» хаçата майăн 6-мĕшĕнче çакăн пек фотоӳкерчĕк кĕртнĕ: 18 çулти арçын ача, 60 çулти старик тата пĕр 35—40 çулсенчи хресчен тăраççĕ. Вĕсем пурте хресчен тумтирĕпех. Пур енчен те çак çынсене ирĕксĕрех тӳрленсе тăма хушни палăрать. Анчах та, çак ӳкерчĕк айĕнче çырнине вуласа пăхсан, тĕлĕнсех каятăн. Унта — «Хĕрлĕ Çар ретне ирĕксĕр мобилизациленĕ 70 çулти старикпе ...ăн 12 çулти ывăлĕ» тесе çырса хунă.

Швецири журналистсем хушшинче Геббельсăн çакăн пек «документсенчен» кулаççĕ кăна. Пурте вĕсене ĕненмелле мар фальшивкăсем тесе шутлаççĕ, ун пек «документсене» ытти çĕршывсенче кăна мар, Германире хăйĕнче те ĕненме пăрахаççĕ.

Нимĕç захватчикĕсем партизансенчен хытă хăраççĕ

СТОКГОЛЬМ, майăн 14-мĕш. (ТАСС). Ригăран çитнĕ çынсем çапла каласа кăтартаççĕ: нимĕçсем оккупациленĕ районсенче тумтир тата продовольстви çитменни питех те палăрать. Кирек ăçта та, пуринчен ытла Ригăра, Таллинра тата Каунасра, спекуляци саралса кайнă. Германи салтакĕсемпе офицерĕсем, хăйсене асаплантарса вĕлерессине пăхмасăрах, Германи склачĕсенчи продуктсене, тумтирсене тата хĕçпăшала та сутаççĕ. Фашистсен пуçлăхĕсене çакă питех те хăратса пăрахнă: иртнĕ эрнере Рига çывăхĕнчи çулпа пынă чухне хĕçпăшал тиенĕ 4 пысăк грузовик çухалнă. Çав транспорта партизансем тапăнса ăна сыхласа пыракан салтаксене вĕлерсе пĕтернĕ пулĕ, тесе шутлаççĕ.

Хĕвелтухăç фронтĕнчи ĕçсем татах та ытларах пăсăлса кайсан, кунти халăх хĕçпăшаллă восстани пуçласа ярассинчен нимĕçсем хытă шикленеççĕ. Çакă паллă: Прибалтикăри совет республикисенчи халăх хĕçпăшал тата боеприпассем нумай пытарса усрать. Çак кунсенче Рига тĕрминче хĕçпăшалпа суту-илӳ тунăшăн нимĕçсен 6 салтакне тата темиçе латыша персе пăрахнă. Германин арсеналĕсенчен сахалтан та 1.000 винтовка тата патрон тултарнă ещĕксем нумай çухалнă.

Гитлерла Германири плутократсен комитечĕ

ЖЕНЕВА, майăн 13-мĕш. (ТАСС). Германире официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, унта вооруженипе боеприпассен министерстви çумĕнче вооружени тĕлĕшпе ĕçлекен комитет тунă, çав комитет аллине тĕрĕссипе Германин йывăр промышленноçне ертсе пырасси те куçать. Вăл комитета Германири финанс капиталĕн чи пысăк магначĕсем пурте кĕреççĕ, вĕсем хушшинче: АЭГ ятлă электроконцерна тытса тăракан Бюхер, Берлинри Бергман электрокомпанин пуçлăхĕ Филипп Кеснер тата ытти те пур.

Совета çавăн пекех тата хĕçпăшаллă вăйсен представителĕсем — Мильх, Фром, Лееб тата ытти те кĕреççĕ; вĕсем финанс плутократийĕпе таччăн çыхăннă, Герингăн, Круппăн, фон Боленăн тата ыттисен концернĕсен акцийĕсене тытса тăраççĕ.

Англие Канада войскисем çитнĕ

ЛОНДОН, майăн 14-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Канада войскисен çĕнĕ контингенчĕ Англие тĕрĕс-тĕкелех çитнĕ. Çак подкреплени тĕрлĕ войскăсем пур, вăл шутра: пехота, артиллери, санитари чăçĕсем, бронетанковăй чăçсем. Унсăр пуçне тата Англие летчиксем темиçе çĕр çын çитнĕ.

Пĕлтерӳ

Майăн 18-мĕшĕнче ВКП(б) хула Комитечĕн агитпунктĕнче Шупашкар хулинчи МОПР ячейкисен председателĕсен тата ертсе пырас ĕçри активăн семинарĕ пулать.

Семинар каçхине 7 сехетре пуçланмалла.

Адрес: Чăваш урамĕ, 6-мĕш №-лĕ çурт.

МОПР Хула комитечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

НАРОДНЫЙ КОМИССАРИАТ ФИНАНСОВ ЧУВАШСКОЙ АССР

На основании Указа Президиума Верховного Совета Союза ССР от 10 апреля 1942 года и постановления Совнаркома РСФСР от 7 мая 1942 года «О местных налогах и сборах»

о б ' я в л я е т:

1. Налогом со строений облагаются жилые дома, фабрично-заводские здания, склады, торговые помещения, театры и всякого рода другие строения (с обслуживающими их постройками), принадлежащие предприятиям, учреждениям, организациям.

Налог взимается в следующих размерах:

а) со строений жилого фонда государственных, кооперативных и общественных предприятий, учреждений и организаций—в размере 0,5 проц. стоимости строений и

б) с остальных строений — в размере 1 проц. стоимости строений.

Налог со строений исчисляется непосредственно предприятиями, учреждениями, организациями и домоуправлениями, которые являются плательщиками налога. Исчисление налога производится по первоначальной оценке строений (без вычета амортизированной части) по данным бухгалтерского учета предприятий, учреждений и организаций по состоянию на 1 января текущего года. При исчислении налога надземные и подземные сооружения в оценку не включаются.

Предприятия, учреждения, организации и домоуправления обязаны не позднее 20 мая 1942 года представить районным (городским) финансовым отделам расчеты причитающихся с них в текущем году сумм налога отдельно по каждому владению. По вновь возведенным строениям, передаваемым в эксплоатацию в течение года, расчет представляется в том месяце, в котором эти строения переданы в эксплоатацию.

За непредставление к указанному сроку расчетов налога и за представление неверных сведений главные (старшие) бухгалтера предприятий, учреждений и организаций и управляющие жилыми домами подвергаются штрафу до 100 рублей. Представление заведомо неверных сведений влечет за собой ответственность в уголовном порядке.

Предприятия, учреждения, организации и домоуправления уплачивают налог равными долями в четыре срока: 15 февраля, 15 мая, 15 августа и 15 ноября.

ПРИМЕЧАНИЕ: доначисленная в текущем году разница налога по первому и второму срокам платежа должна быть внесена в течение 15 дней со дня настоящего об'явления.

2. Земельная рента взимается за застроенные и незастроенные земли, предоставленные предприятиям, учреждениям, организациям в бессрочное пользование и по договорам о праве застройки.

Ставки земельной ренты за квадратный метр установлены в следующих размерах: г. Чебоксары — 9 копеек, г.г. Алатырь, Канаш и Шумерля — 6 копеек, остальные города, рабочие поселки, сельские местности — 4 копейки.

За участки поверхности, предоставленные государственным горным и горно-заводским предприятиям для нужд, связанных с эксплоатацией горных отводов, сумма земельной ренты понижается на 85 проц.

Земельная рента исчисляется по каждому отдельному участку со всей площади, входящей в пределы данного участка, включая площадь под оврагами, прудами и т. п.

Земельная рента исчисляется и уплачивается в том же порядке, по тем же правилам и в те же сроки, как и налог со строений.

В случае неуплаты местных налогов и сборов в установленные сроки с предприятий, учреждений и организаций взимается пеня за просрочку платежа в размере 0,1 проц. за каждый день просрочки и в отношении неплательщиков принимаются меры принудительного взыскания, установленные для взыскания налогов.

НАРКОМФИН ЧУВАШСКОЙ АССР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 151 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 0: ж